25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
28
ШĂМАТКУН
277 (6212) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вăрман хатĕрлевĕн хĕрÿллĕ тапхăрĕ

Чугунçул транспорчĕ — паттăр Хĕрлĕ Çарăн тăванĕ, унăн çапăçури çывăх помощникĕ. Транспорт фронта мĕн кирлине пурне те тата вăхăтра турттарса тăнинчен Хĕрлĕ Çарăн кĕрешÿри ăнăçлăхĕ килет.

Транспорт вăрçă вăхăтĕнчи пек тĕрĕс те тикĕс ĕçлетĕр тесен, ăна топливо ситтелĕклĕ хатĕрлесе парас пулать. Топливо шутне çĕркăмрăкĕпе пĕрлех вутă та кĕрет. Вутă—чи нумай, чи йÿнĕ топливо.

Пирĕн чăваш çĕршывĕ чугунçула кирлĕ вутăла пуян. Оборонăн Государственный Комитечĕн заданийĕ тăрăх, республикăри вăрман промышленноçĕн çав вутта сахал мар хатĕрлемелле.

Вутă хатĕрлесси — вăрман промысла хуçалăхĕсемпе завочĕсен чи пысăк ĕçĕ, вĕсен çĕршыв умĕнчи таса тивĕçĕ. Вăрман промышленность работникĕсенчен чылайĕшĕсем çак ĕçе тивĕçлипе туса пыраççĕ. Иртнĕ сезонра вутă хатĕрлес тата турттарас тĕлĕшпе Правительство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçланăшăн республикăра 15 çынна Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă.

Чугунçул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе пирĕн вăрман промышленноçĕ кăçалхи сезонра та начар мар ĕçлет. Ултă уйăхри плана ноябрĕн 24-мĕшĕ тĕлне хатĕрлес енĕпе 96 процент тултарнă. Йĕпреçри, Вăрнарти, Атăл лешъенчи леспромхозсем вутта заданирен ирттерсе хатĕрлеççĕ.

Плана ăнăçлăн тултарасси, чи малтанах, районсем ĕç вăйĕ çителĕклĕ уйăрса панинчен килет. Кăна эпир Йĕпреç, Шупашкар тата Улатăр районĕсен примерĕнчен калама пултаратпăр. Асăннă районсенчи партипе совет органĕсем вăрманта ĕçлеме кирлĕ лашасемпе çынсене кăлартанах йышлă уйăрса пачĕç, вутă хатĕрлемелли задание вĕсем срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç. Йĕпреç районĕ задание хатĕрлес енĕпе 35 процент, турттарас енĕпе 13 процент ирттерсе тултарнă.

Анчах чылай районсем вăрманта ĕçлемелли çынсене пачах та çителĕксĕр уйăрса параççĕ. Уйрăмах ку тĕлĕшпе Октябрьски, Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав тата Тăвай районĕсене ятламалла. Ку районсенчен планпа палăртнă ĕç вăйĕн тăваттăмĕш пайĕ те вăрманта ĕçлемест. Октябрьски районран, сăмахран, лашапа 50 çын, çуран 75 çын ĕçлемелле. Хальхи вăхăтра унтан 9 çын кăна ĕçлет. Элĕк, Çĕмĕрле тата Советски районсем те ĕç вăйне начар тăратаççĕ. Чылай районсем ĕç вăйне çавăн пек çителĕксĕр тăратнă пирки республикăра вутă хатĕрлес ĕçре çынсем те, лашасем те çителĕксĕр.

Районсенчи партипе совет органĕсем вăрманта ĕçлемелли лавсемпе çынсене планпа палăртнă чухлех уйăрса пама тивĕçлĕ. Парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен çакна ăнланса илмелле: чугунçул валли вутă хатĕрлесси—оборонăллă питех те пысăк ĕç. Çак ĕçĕн ăнăçлăхĕ вĕсем ĕç вăйĕ мĕнле парса тăнинчен килет. Çавăнпа та ĕç вăйĕ, уйрăмах лашасем, çителĕксĕр тăратса плана тултарассине вăраха яни çĕршыв умĕнче айăпа кĕни пулать.

Плана тултарасси турттарас енĕпе сÿрĕк пырать. Çурçулти задание республика 77 процент çеç тултарнă. Чылай леспромхозсемпе вăрман завочĕсем ку енĕпе питĕ начар ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пункчĕ задание хатĕрлес енĕпе вĕçленĕ, анчах турттарас енĕпе 63 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех ку енĕпе Буинскри, Алтышеври тата Кирери вăрман завочĕсем те юлса пыраççĕ. Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕ те вутта çителĕксĕр хăвăртлăхпа турттарать.

Республикăри вăрман хатĕрлекен пур предприятисен те турттарас ĕçĕн хăвăртлăхне ÿстермелле. Çакна тума вĕсен халĕ майсем çителĕклĕ: вăрмана ĕç вăйĕ ытларах пыма пуçларĕ, çуна çулĕ тытăнчĕ. Вăрман промышленноçĕнчи ертсе пыракан работниксем ĕç вăйне тĕрĕс тăратса тухни, транспорт средствисемпе, механизациленĕ çулсемпе туллин усă курни çеç кирлĕ. Хăшпĕр леспромхозсен рабочисем пĕрмаях улшăнса тăнине пĕтерсе, вĕсене плана тултарачченех çирĕплетсе хăварас пулать. Вутă касакансемпе турттаракансем хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне анлăн сарса ямалла, вĕсене çулпуç сăмахĕсемпе, фронтри ырă хыпарсемпе хавхалантарса, задание срокчен тултарма мобилизацилемелле.

Вăрманта ĕçлекенсене вутă хатĕрлес ĕçри çĕнĕ йĕрке çинчен, заданисене ирттерсе тултаракансене государство паракан льготăсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса пани кирлĕ. Çав çĕнĕ йĕрке тăрăх, кăçалхи тăваттăмĕш кварталта заданирен ирттерсе хатĕрленине килес çулхи пĕрремĕш квартала кĕртсе шутлаççĕ. Çапла вара, тăрăшса ĕçлесен, 1943 çулти задание кăçалах чылай тултарма пулать.

Партипе правительство вăрманта ĕçлекенсем çинчен манмасть, вĕсене льготăсем парса пулăшать. Хальхи çĕнĕ йĕрке тăрăх, вутă хатĕрленĕ çĕрте задание ирттерсе тултаракан колхозниксене колхозран государство хакĕпе продуктсем пама ирĕк панă. Çак паха йĕркепе вăрман касакан тата турттаракан кашни колхознике паллаштарас пулать, мĕншĕн тесен вăл вутă хатĕрлекенсен ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшать.

Тăван çĕршыв вăрман промышленность работникĕсене панă ытти заданисем çинчен те—чугунçул валли шпал, шахтăсене çирĕплетмелли материал, Хĕрлĕ Çар валли урапасем, йĕлтĕрсем тата ытти изделисем тăратмалли заданисем çинчен те—манма юрамасть. Вăрçă вăхăтĕнче пур ĕçе те срокра тата лайăх тăвас пулать.

Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ çине ответлесе, вăрман хатĕрлекен чылай предприятисем хăйсен ĕçне вăйлатма пулчĕç, çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Халĕ, пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче ăнăçлăн наступлени туса пынипе хавхаланса, вăрман касакансемпе турттаракансем ĕç хăвăртлăхне кунран кун ÿстереççĕ. Вĕсен ĕçлес кăмăлĕ пысăк. Вăрман хатĕрлекен предприятисенчи ертсе пыракан работниксен задачи — пур работниксемпе работницăсене те ăмăртăва явăçтарасси, задание кашни пункт, участок тата бригада тăрăх, нормăна кашни рабочи тултармалла тăвасси. Çĕршывпа фронта кирлĕ вутта, çывăç материалсене вăхăтра тата ситтелĕклĕ таран парса тăрар!

Совет войскисен çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе

ЙĔПРЕÇ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче ăнăçлăн наступлени туса пыни çинчен Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернĕ хыпарсем «Тымар» колхозăн мастерской участокĕнче чугунçул валли вутă хатĕрлекенсен ĕçри хастарлăхне тата та ÿстерчĕ. Вĕсем яланхинчен тухăçлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Мастер Петров, вутă касакан стахановецсем Чураков, Шашкин, Орлов тата Аксянов юлташсем хăйсен ĕç нормисене кулленех 150—200 процент тултараççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн Сталинград районĕнчи çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, асăннă мастерскойăн участокĕнче ĕçлекенсем кăçалхи сезонра вутă хатĕрлемелли плана срокран пĕр уйăх малтан тултарма пулчĕç. Ноябрĕн 20-мĕшĕччен вара вĕсем 3.487 кубометр вутă касса хатĕрленĕ, 1.278 кубометр турттарнă.

Колхозсенчен халĕ çеç пынă рабочисем те нормăран тухăçлăрах ĕçлеççĕ. «Çĕнĕ пурнăç» колхоз членĕсем П. Павлов, Ф. Галкин, П. Анисимов, М. Александров тата унăн ывăлĕ Федот куллен икшер норма тултараççĕ. «11 лет Чувашии» колхоз членĕсен Г. Визовпа С. Сизов тата «Комбайн» колхоз членĕн А. Никитина юлташсен ĕç тухăçлăхĕ те 200 процентран кая мар.

Д. МИХАЙЛОВ.

Хатĕрленĕ вутта турттарма васкамалла

ЭЛĔК. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри предприятисемпе учрежденисем, шкулсемпе больницăсем валли кăçал план тăрăх 7.500 кубометр вутă касса хатĕрлемелле пулнă. Учрежденисенче ĕçлекенсем, шкулсенче вĕренекенсем вутă хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлесине пула ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне мĕн пурĕ 8.824 кубометр вутă хатĕрленĕ. Вăл шутран шкулсем 4524 кубометр, больницăсем 200 кубометр хатĕрленĕ.

Касса хатĕрленĕ вутта турттарас ĕç вара районра юлса пырать. Паянхи кун тĕлне шкулсем 1.718 кубометр, больницăсем 150 кубометр çеç турттарнă. Райпотребсоюзра ĕçлекенсем вутă хатĕрлес тĕлĕшпе питĕ япăх ĕçлеççĕ. Вĕсен мĕн пурĕ 400 кубометр хатĕрлемелле. Анчах паянхи кун тĕлне 100 кубометр çеç хатĕрленĕ, вăл шутран нимĕн чухлĕ те турттарман. Çу завочĕ вара вутă хатĕрлеме те тытăнман. Элĕк сельповĕн вутă питех те сахал. Çакăн пирки часчасах сельпо председателĕ Порфирьев та, столовăй, пекарня заведующийĕсем те чупкаласа çÿреççĕ, çав вăхăтрах хăйсен работникĕсене вутă хатĕрлеме вăрмана ямаççĕ. Районри апат-çимĕç комбиначĕ те хатĕрленĕ вутта кÿмесĕр тăрать.

Тăрăшса ĕçлекенсем харпăрхăй валли тахçанах вутă кÿрсе пынă. Тĕслĕхрен, Элĕкри вăтам шкул (директорĕ С. Быков юлташ) 300 кубометр вутă хатĕрленĕ, вăрмантан та кÿрсе килнĕ.

Вутă хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлекенсен лайăх ĕçлекенсенчен пример илмелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград районĕнче, противник хирĕç тăнине сирсе пырса, малтанхи еннеллех наступлени туса пынă.

Пирĕн войскăсем **Красное Село, Генералов, Калачкин, Перепольный, Верхний Герасимов, Нижний Герасимов, Верхний Акатов, Ягодный, Скляров, Ляпичев, Нижне-Кумский, Громославка, Генераловский, Дарганов** ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ.

* * *

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкне, 100 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă, пĕр поездне çĕмĕрнĕ, артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотин 2 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград хулин çурçĕр пайĕнче пирĕн чаçсем пĕр рабочи поселока çĕмĕрсе кĕрсе кайнă, унта халь противникпа вăйлăн çапăçаççĕ. Тепĕр участокра Родимцев юлташ ертсе пыракан соединени, тăшман хирĕç тăнине сирсе пырса, темиçе урама йышăнса илнĕ тата нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 5 танкне çунтарса янă. Хулан кăнтăр хĕрринче противникпа хаяррăн çапăçнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла куçса пынă. Хăйсен чаçĕсене çапса аркатасран сыхласа хăварас тесе нимĕçсем çирĕплетнĕ рубежсенче питех те вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Пирĕн ударнăй группăсемпе артиллери гитлеровецсен опорнăй пункчĕсене пĕтерсе пырса, пирĕн танксемпе пехота валли çул уçса параççĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн каялла чакакан чаçĕсене хăваласа пырса, 10 оруди, 200 автомашина, 4 танкетка, 2.000 мина тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ. Противникăн 2.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 750 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тĕрлĕ калибрлă 100 оруди таран, 39 миномет, 180 автомашина тата боеприпассемпе ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсен 3 складне тытса илнĕ. Н-ски мотоциклетнăй часть противникăн тылĕнче кĕрешсе халăх пурăнакан темиçе пунктра нимĕç гарнизонĕсене пĕтерсе-пĕтерсе тăкнă. Çав чаçăн боецĕсем пĕр кун хушшинче 800 гитлеровеца ытла вĕлернĕ, 75 автомашина, 418 пулемет, 150 автомат, 700 винтовка, 5 склад тытса илнĕ тата противникăн 1.200 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла куçса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра тăшманăн пехотнăй полкне аркатса тăкнă. 8 оруди, 34 пулемет, 9 миномет, боеприпассем тиенĕ 80 лав тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн кавалери чаçĕ 700 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă тата нумай çынна тыткăна илнĕ. 8 танк, 11 оруди, 29 пулемет, боеприпассен 2 складне, 3 радиостанци тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем вырăнти çапăçусем туса пынă. Н-ски часть, противникăн икĕ атакине сирсе ярса, гитлеровецсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллеристсем 4 танк çунтарса янă, артиллерин 2 батарейине тата минометсен 4 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре хире-хирĕç артиллерирен персе тăнă тата разведчиксем шыраса çÿренĕ. Третьяков капитанăн подразделени участокĕнче тăшманăн автоматчикĕсен группине, пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕме хăтланнăскерне, пĕтерсе тăкнă. Бондаревский юлташ ертсе пыракан подразделенин артиллерисчĕсем боеприпассем тиенĕ 10 автомашинăна, 2 пулеметнăй точкăна тата гитлеровецсен 2 взводне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен отрячĕ ноябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче 3 автомашина, радиостанци пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 53 çынна вĕлернĕ. Партизансен тепĕр отрячĕ пĕр уйăх хушшинче 8 поезда ÿпĕнтерсе янă, 2 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата противникăн карательнăй отрядне аркатса тăкнă.

* * *

Югослави партизанĕсем темиçе хут хаяррăн çапăçнă хыççăн Ситница местечкине тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта тытса илнĕ. Ситница патĕнче пынă çапăçусенче противникăн 700 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Партизансен пĕрлешнĕ отрячĕсен группи нимĕçсемпе итальянец оккупанчĕсен вак отрячĕсене пĕтерсе пырса, хăвăртăн пĕр хула патне çывхарса пыраççĕ.

Ноябрĕн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** хули районĕнче, противник хирĕç тăнине сире-сире ярса, малтанхи еннеллех наступлени туса пынă.

* * *

Сталинград хулин çурçĕр пайĕнче пирĕн боецсем противника флангсенчен пырса çапса каялла ыватса янă та 4 пысăк квартала йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 250 салтакпа офицер ытла вилнĕ. Заводсен районĕнче пирĕн чаçсем малалла куçнă. Çĕркаçа противникăн 700 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре совет войскисем, противник хирĕç тăнине сире-сире ярса, малалла куçса пынă. Пĕр участокра Шехтман тата Меркулов юлташсем ертсе пыракан чаçсем тăшманăн 1.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, нумай çынна тыткăна илнĕ тата юсавлă 3 самолет, 99 оруди, 3 танк, 65 пулемет, 9 миномет, 164 автомашина, 520 велосипед тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн танкистсемпе пехотинецсем противникăн 66 танкне тата 25 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пĕр чугунçул разъездне йышăнса илсе, пирĕн боецсем 19 паровоз, 100 вагон, бензин тултарнă 160 пичке тата çар пурлăхĕсен темиçе складне тытса илнĕ. Совет летчикĕсем, çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, нимĕçсен каялла чакакан войскисене штурмланă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлениллĕ операцисем туса пынă. Çĕрлехи çапăçусенче пирĕн пĕр соединени кăна тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, унăн 23 пулеметнăй точкине, 4 орудине, 5 танкне тата 13 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем нимĕçсенчен 6 оруди, 2 бронемашина 24 пулемет тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ тата çапăçса пырса разведка тунă. Пĕр участокра пирĕн артиллери тăшманăн пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕç автоматчикĕсем пирĕн оборона ăшне сăрхăнса кĕрсе кайнă пулнă. Тăшманăн çав автоматчикĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă, 75 автомат тата 2 пулемет тытса илнĕ. Пирĕн летчиксем противникăн аэродромĕ çинче нимĕçсен 2 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче артиллерирен сайра-хутран хире-хирĕç персе тăнă. Старши лейтенант Ходорченко ертсе пыракан боецсен группи противникăн артиллери батарейин позицийĕсем патне пырса тухнă. Совет артиллерийĕ пеме тытăнсан, гитлеровецсем блиндажсенчен сиксе тухса хăйсен орудийĕсем патне чупса кайнă. Çав вăхăтра çывăхра пытанса тăнă пирĕн боецсем пеме тытăннă та оруди расчечĕсене вĕлерсе пĕтернĕ. Унтан, противникăн орудийĕсене сирпĕнтерсе ярса, вĕсем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Украина облаçĕнчен пĕринче керешекен партизансен отрячĕ пĕр уйăх хушшинче противникăн войскăсемпе çар грузĕсем турттарса пыракан 5 поездне ÿпĕнтерсе янă. Крушенипе пула 5 паровоз, çар техники тиенĕ 87 вагон çĕмĕрĕлнĕ тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем нумай пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенчи хресченсене тĕрлĕ налогсемпе халран яраççĕ. Витебск облаçĕнче гитлеровецсем хресченсем çине темиçе вуншар тĕрлĕ налогсем хунă. Нимĕçсен комендатурисене, жандармерине, бургомистрсене, старостăсене усрама налогсем хунă. Çĕр тăрăх тата ят тăрăх пухакан налогсемсĕр пуçне хресченсен тата кашни чÿречешĕн, кашни мăрьешĕн, кашни хур-кăвакалшăн т. ыт. те налог тÿлемелле. Пĕтĕм облаçĕпе хунă налогсемсĕр пуçне кашни комендант укçан тата натуроплата тÿлемелли повинноçсем туса хурать. Çав мĕнпур налогсен тĕллевĕ—халăха çаратса пĕтересси тата совет çыннисене выçлăха хăварса вилсе пĕтмелле туса хурасси пулса тăрать.

Нимĕç командованийĕ Сталинград районĕнчи çапăçусем çинчен суйса пĕлтерни

Совет войскисем нимĕçсен оборона линине татнине тата нимĕç войскисем Сталинград районĕнче питех те пысăк çухатусем тÿснине нимĕçсен командованийĕ малтанхи кунсенче хăйĕн салтакĕсенчен тата Германи халăхĕнчен пытарса усранă. Çав факта урăх пытарса тăма май çук пулса тăрсассăн, гитлеровецсен пуçлăхĕсем вара совет войскисем нимĕçсен оборона линине татнине асăрханарах, чĕрĕк сасăпа каласа йышăннă, анчах та хăйсен çухатăвĕсене вĕсем паянхи кун та пытарса усраççĕ-ха. Ун вырăнне вара гитлерла командовани совет войскисен çухатăвĕсем çинчен çине тăрсах арабла халлапсем каласа пама тата тĕрлĕ суя сăмахсем сарма тытăннă.

Сăмахран, нимĕçсем хăйсен пĕр пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: эпир икĕ кун хушшинче советсен 10 танковăй бригадипе стрелковăй дивизине çĕмĕрсе тăкрăмăр, тенĕ. Нимĕçсем çав пĕлтерÿре советсен çакăн пек номерлĕ дивизийĕсемпе бригадисене: 463-мĕш, 333-мĕш, 321-мĕш, 30?-мĕш стрелковăй дивизисене, 121-мĕш танковăй дивизине, 155-мĕш, 163-мĕш тата 235-мĕш танковăй бригадăсене, 5-мĕшпе ?-мĕш кавалерийски дивизисене пĕтерсе тăкнă тесе кăтартнă. Нимĕç командованийĕн çав пĕлтерĕвĕ вăл суя сăмах пулса тăрать, мĕншĕн тесессĕн нимĕçсен пĕлтерĕвĕнче кăтартнă хăшпĕр дивизисем (сăмахран, 463-мĕш стрелковăй, 121-мĕш танковăй тата ытти хăшпĕр дивизисем) Хĕрлĕ Çарта çук та, пулман та, ытти дивизисемпе бригадăсем пирĕн войскăсен Сталинград хули районĕнче наступлени туса пыракан группăсен составĕнче çук тата пулман та. Наступлени туса пыракан войскăсен составĕнче пуррисене илсен, вĕсене пĕрех те çĕмĕрсе тăкман, вĕсем халь ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ. Çакă ĕнтĕ вăл—жуликла хăтланнин пĕр тĕслĕхĕ пулса тăрать.

Гитлерла шулерсен тепĕр тĕрлĕ хăтланăвĕ: вĕсем вуншар радиопередачăсенче сасартăк «нимĕç çарĕн çĕнĕ, питех те вăйлă хĕçпăшалĕ» çинчен кала пуçлани.

Мĕнле çĕнĕ йышши хĕçпăшал-ха вăл?

Вăл — вут-çулăм ывăтакан çĕнĕ танк имĕш (çав танк 5 хутлă çурт урлă та çулăм ывăтма пултарать пулать), тата пĕр минутăра 3 пин пуля кăларса ыракан электричествăллă пулемет имĕш. Чăннипе илсен, нимĕçсен вут-çулăм ывăтакан çĕнĕ танк çук, вĕсен вăрçăн малтанхи кунĕсенчех усă курнă вут-çулăм ывăтакан танксем çеç пур. Нимĕçсен минутăра 3 пин пуля кăларса ыракан халапла пулемет та çук.

Апла пулсан мĕншĕн-ха вĕсем çавăн пек тĕнчере çук хăватсем çинчен каласа кăтартаççĕ? Паллах ĕнтĕ, гитлеровецсем çакна нимĕçсен питех те йывăр условисене кĕрсе ÿкнĕ войскисене пĕтĕмпех арканса каясран сыхласа хăварас тесе тата кирек мĕнле майпа та пулин вĕсене çапăçтарас тесе тăваççĕ. Çав суя сăмахсем гитлеровецсене тата тылри нимĕçсене мĕнле те пулсан йăпатма кирлĕ.

Анчах та арабла халлапсемпе инçе каяймăн. Тĕрĕслĕхе пытараймăн, тĕрĕслĕх вăл çĕнтеретех!

СОВИНФОРМБЮРО.

Наступлени малалла пырать

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, ноябрĕн 26 мĕшĕ. («Правда» военкорĕ). Фронталла каякан пĕтĕм çул тыткăна илнисемпе тулса ларнă. Черетлĕ колоннăна ирттерсе ярас тесе эпир час-часах чарăнатпăр. Пилĕк минута, вуннă, вунпилĕк минута кĕтетпĕр, машинăсем йĕри-тавра утклатпăр, урасем те шăнма тытăнаççĕ, тыткăна илнисем, ултшарăн тăнăскерсем, çаплах иртеççĕ, вĕсен вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Вĕсем вăрахăн та салхуллăн утаççĕ, пĕр-пĕринпе хуллен калаçкалаççĕ.

Эпир аркатмаллах наступлени тăвассине тăшман пачах та кĕтмен. Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри участоксенчен пĕринче Дон шывĕ тарăнăн кукăрălса кĕрет. Пирĕн çыран хĕрринче вырнаçнă чаçсем противникăн тылне хăратса тăнă. Совет войскисем хăйсен позицийĕсене уйăх çурă хушши лайăхлатса пынă, наступлени тума хатĕрленсе противника хĕснĕ.

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче, артиллерирен тăвăллăн персе хатĕрленнĕ хыççăн, пирĕн войскăсем противникăн оборона линине татнă. Штурмовой батальонран тыткăна лекнĕ салтаксем çакна кăтартса пачĕç: артиллери снарячĕсемпе минăсен тăвăллă вут-çулăмĕ нимĕç салтакĕсене паникăна ÿкернĕ. Уйрăмах вырăссен гвардейски миномечĕсем хытă аркатнă. Минăсем çурăлнипе пĕтĕм çĕр чĕтренĕ. Нимĕçсен чылай офицерĕсем çапăçу хирĕнчен васкасах тарнă.

— Пирĕн батальон начальникĕ хăйĕн буркипе шинелне блиндажрах пăрахса хăварчĕ,—тесе каласа парать тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕ.

Наступленин малтанхи кунĕнчех пирĕн чаçсем чылай малалла кайса, Дон шывĕн кукăрĕнче противникăн 3 пехотнăй дивизине çавăрса илнĕ. Çав дивизисем пурте хĕçпăшалсене пăрахса, хăйсен штабĕсемпе тата генералĕсемпе пĕрлех Хĕрлĕ Çар аллине парăннă. Тыткăнрисем хушшинче виçĕ генерал тата офицерсем нумай. Генералсемпе офицерсене, тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе калакан пĕтĕм тĕнчери правилăсем тăрăх, тыла куçарса кайнă ĕнтĕ. Противникăн çывăха вырнаçнă дивизийĕн чаçĕсем хирĕç тăма хăтланнă, анчах вĕсене е пĕтерсе тăкнă, е хăшпĕрисене тыткăна илнĕ.

Пирĕн чаçсем малалла наступлени туса пыраççĕ. Çапăçу пыракан вырăнсем патнелле нимĕçсем васкасах хăйсен резервĕсене куçарса пыраççĕ. Пирĕн пĕр чаçа хирĕç фашистсем 180 танк кĕртсе янă. Вĕсенчен 60 танка çĕмĕрсе тăкнă, ыттисем каялла чакнă.

Гитлеровецсен Сталинград районĕнче çапăçакан авиацине сисĕнмеллех аркатнă. Пирĕн войскăсем нумай аэродромсене тытса илнĕ. Çав аэродромсенчен хăшпĕрисем çинче нимĕçсем юсавлă самолетсенех пăрахса хăварнă.

Пĕлĕтлĕ çанталăк пирки нимĕçсен авиацийĕ сывлăша питех те сахаллăн çĕкленет. Çÿлтен мар вĕçсе пыракан хăшпĕр самолетсене пирĕн боецсем пехота хĕçпăшалĕпе персе-персе ÿкереççĕ.

П. ЛИДОВ

(«Правда» хаçатран).

Чаплă юбилей

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Н-ски соединени хăйне туни çулталăк çитнине палăртать. Çав соединенин боецĕсемпе командирĕсем Мускав патĕнчи çапăçусенче хăйсен ялавĕсене нихçан манми чапа кăларнă. Вĕсем нимĕçсене аркатмаллах пырса çапнă, вĕсем тăшмана столица хÿмисем патĕнчен хăваласа янă. Дмитров, Яхрома патĕнчи çапăçусенче, Москва—Волга каналĕ çинче çав соединени нимĕçсен кĕтĕвĕсене тытса чарса, вĕсене хĕвеланăçнелле хăваласа янă. Вăл виçĕ эрне хушшинче çапăçса пырса 150 километр ытла кайнă, халăх пурăнакан 700 пункта ытла, çав шутра Яхромана, Солнечногорска, Клина ирĕке кăларнă. Вăл çапăçусенче нимĕçсенчен 247 танкпа бронемашина, 5.000 автомобиль, 545 мотоцикл, 300 оруди ытла, 600 миномет, 204 пулемет, темиçе миллион патрон тата темиçе пин снаряд тытса илнĕ. Совет боецĕсем Мускав çывăхĕнче нимĕçсен 25.000 салтакĕпе офицерне вĕлерсе тăкнă. Мускав патĕнчи çапăçусенче хăюлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн çав соединенин мĕнпур личнăй составне Сталин юлташ тав тунă. Боецсемпе командирсене тата политработниксене—пурĕ 850 çынна—орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Н-ски соединенин боецĕсем хăйсен çапăçури йăлисене таса тытса тăраççĕ тата ÿстерсе пыраççĕ. Пулеметчик Федор Чистяков пĕр çапăçура 200 нимĕçе вĕлернĕ. Ăна Ленин орденĕпе наградăланă. Снайпер Николай Козырев 126 гитлеровеца вĕлернĕ, зенитчик Николай Полувалов тăшманăн 10 самолетне персе ÿкернĕ. Василий Еремеевпа Александр Морозов, йывăр оруди патĕнче иккĕн çеç тăрса юлса, нимĕçсен атакине сирсе янă, нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ тата 100 гитлеровеца ытла вĕлернĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртес ĕмĕтпе Чăваш республикинчи колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисем вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешсе, республикăри колхозсем ялхуçалăх умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама хăйсен пĕтĕм вăйне мобилизацилерĕç. МТС работникĕсем, трактористсемпе комбайнерсем хăйсен ĕçне нумай хут лайăхрах организацилерĕç. Çавна пула кăçал пирĕн колхозсем тырпулсене уйхиртен хăвăртрах тата лайăхрах пухса кĕртрĕç, машинно-тракторнăй паркăн вăйĕпе туллинрех, йĕркеллĕрех усă курчĕç. Республикăри колхозсем кĕрхи тырăсене вăрçăчченхинчен 58.000 гектар ытларах акса хăварчĕç. Колхозсенче те, МТС-сенче те ĕç дисциплинине палăрмаллах лайăхланчĕ. Нумай колхозсем ĕçри ответлăха ытларах туйма тытăнчĕç. Дисциплинăна юхăнтарма пăхакан çынсене хирĕç, кахалсене хирĕç колхозниксем хăйсем хаяррăн кĕрешсе пычĕç. Ĕç нормине кулленех икшер-виçшер хут ирттерсе тултаракан колхозниксен йышĕ ӳсрĕ, нумай трактористсемпе комбайнерсем стахановла ĕçĕн тĕслĕхĕсене кăтартрĕç.

Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене стахановла пысăк хăвăртлăхпа тата лайăх пахалăхпа туса пыракан трактористсемпе комбайнерсен ячĕсем пĕтĕм республикăна паллă. Çĕмĕрле МТС-ĕн комбайнерĕ Михайлов юлташ кăçал хăйĕн комбайнĕпе 510 гектар тырă пухса кĕртнĕ. Шăмăршă МТС-ĕн комбайнерĕ Федотов юлташ комбайнпа 620 гектар вырса пухнă. Трактористсем: Анна Гордеева (Елчĕк МТС-ĕ) «СХТЗ» тракторпа кăçал 468 гектар сухаланă, 885 килограмм горючи перекетлесе хăварнă, Елена Кудрявцева (Шупашкар МТС-ĕ) хăйĕн тракторĕпе çулталăкра 294 гектар сухалас вырăнне 508 гектар сухаланă, 1.402 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Ытти районсенчи трактористкăсем те, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр, кăçал пысăк пахалăхпа ĕçлерĕç. Вăрмар МТС-ĕн трактористки Ирина Ануфриева юлташ хăй ĕçлекен «У—2» маркăллă тракторпа кăçал 132 гектар сухаланă, сӳрелесе акнă. План тăрăх унăн 65 гектар сухаламалла пулнă; Йĕпреç МТС-ĕнчи трактористка Анна Евдокимова юлташ та «У—2» маркăллă тракторпа 172 гектар сухаланă. Тăвай МТС-ĕн «СХТЗ» маркăллă тракторĕпе ĕçлекен Нина Кузьмина юлташ 225 гектар вырăнне кăçал 386 гектар сухаланă, ĕçре кашни грамм горючие тирпейлĕн расходласа 1.560 килограмм перекетлесе хăварнă.

Çак ӳсĕмсем вĕсем пирĕн колхозсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек урăхлатса çĕнетнинчен пĕтĕм колхозниксен масси ĕçе пысăк хавхаланупа туса пынинчен, фронтпа тăван çĕршыва ялхуçалăх продукчĕсем ытларах туса парассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçленинчен килчĕç.

ВЦСПС-па СССР Наркомземĕ тата СССР Наркомземĕн Политуправленийĕ вăйлă тырпулшăн тата выльăх-чĕрлĕхĕн йышне ӳстерессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухнă. Малтанхи итогсем тăрăх ăмăртура мала тухнă облаçсемпе республикăсене палăртса, вĕсене Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратнă. Вăл шутра пирĕн республика та пур. Анчах эпир ăмăртура ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсемпех малти вырăна тухайман-ха. Çакна пирĕн ниепле те манмалла мар. Авăн çапас тата вăрлăхлăх акнă кукăрăксене пухса кĕртес тĕллĕшпе эпир нумай ĕçленĕ, ку ĕçсем халĕ те кирлĕ хăвăртлăхсемпе пулса пымаççĕ. Авăн çапас ĕçе те, вăрлăхлăх акнă курăксене пухса кĕртес ĕçе те вăхăтра, пысăк тимлĕхпе туса пыма пирĕн пур условисем те пулнă. Çавăнпа та республика пысăк тырпулшăн пыракан Пĕтĕм Союзри ăмăртура Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăраймарĕ, ВЦСПС-па СССР Наркомземĕ тата СССР Наркомземĕн Политуправленийĕ колхозсемпе МТС-сен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, пирĕн Чăваш республикине выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес енĕпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата МТС-сен паха çитĕнĕвĕсемшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратнă. Çакă вăл пысăк чыс, çакна ăна пирĕн колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисем халĕ икĕ виçĕ хут лайăхрах ĕçленипе çирĕплетме тивĕçлĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăни республикăри колхозсемпе МТС-сем умне çĕнĕ задачăсем лартать. Тырпулсене çапса пуçтарас тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас плана пирĕн кашни колхоз тăрăх халех пурнăçламалла. Çак ĕçсене халех ăнăçлăн вĕçлесен çеç эпир Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулатпăр. Пирĕн колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисен социализмлă ăмăртăва татах та анлăнрах сармалла, государство умĕнчи обязательствăсене тата МТС ĕçĕшĕн тухакан натуроплатăна хăвăртрах парса татмалла.

Çак задачăсене хăвăрт пурнăçлассишĕн халь республикăра фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăх пырать. Нумай колхозсем, МТС-сем çирĕмкунлăхра хăйсен ĕçне çĕнĕлле организацилесе пысăк ӳсĕмсем турĕç. Авăн çапнă çĕрте тата государствăна тырă парас ĕçре нумай колхозниксем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. МТС трактористчĕсемпе комбайнерĕсен те ĕç тухăçлăхĕ вăйлăн ӳсрĕ.

Улатăр МТС-ĕн комбайнерĕ Корсаков юлташ, авăн çапмалли хăйĕн планне тахçанах 120 процент пурнăçланăскер, халь «МК—1100» маркăллă молотилкăпа кулленех 25—30 тонна тырă çапать. Комбайнер Костин юлташ (çак МТС-ранах), тырă вырмалли çулталăк планне 120 процент пурнăçланă хыççăнах, хăйĕн комбайнне авăн çапма вырнаçтарнă, паянхи куна вăл 346 тонна тырă çапса панă та ĕнтĕ. Тракторист Доронкин юлташ трактор ĕçĕн çулталăкри планне 240 процент тултарнă, халĕ вăл хăйĕн тракторĕпе авăн çапнă çĕрте ĕçлет. Ĕç нормине кулленех 180—200 процент тултарать.

Республикăра виçĕ МТС—Елчĕк, Элĕк тата Комсомольски МТС-ĕсем авăн çапмалли 1942 çулти плана пурнăçларĕç. Халĕ ку МТС-сем авăна хăйсен районĕнчи кашни колхозрах хăвăрт çапса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ. Çĕршер колхозсем, транспорт бригадисен ĕçне çирĕп йĕркелесе, государствăна тырă парса татнă, МТС ĕçĕшĕн натуроплатăна пĕтĕмпех тӳлленĕ.

Анчах пур çĕрте те ĕçе çакăн пек организацилесе пымаççĕ-ха. Хăшпĕр МТС политотделĕсем, вĕсемпе пĕрле ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем те, фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăха пур колхозсене те хутшăнтарман, колхоз руководителĕсене ĕçе фронт ыйтнă пек йĕркелеме пулăшман.

Авăн çапнă çĕрте, молотилка агрегачĕсем патĕнче массăллă ăнлантаруллă ĕçе кулленхи ĕçпе çыхăнтарса пымаççĕ, стахановла ĕçлекен колхозниксен, трактористсемпе комбайнерсен паха ĕç опычĕсене сармаççĕ, кашни колхоза кулленхи нормăна тултарса ĕçлемелле туман. Елчĕк, Чкаловски, Пăрачкав тата ытти хăшпĕр районсем авăн çапнă, государствăна тырă турттарнă çĕрте ĕç графикне пурнăçласа пыманнине çак ĕçсене япăх организациленипе çеç ăнлантарса памалла. ВКП(б) райкомĕсен, партин ялсенчи пуçламĕш организацийĕсен, кашни коммунистăн колхозсен ĕçне татăклăн ертсе пымалла, ялхуçалăхĕнчи ĕçсене хăвăртрах вĕçлессишĕн пĕтĕм вăя мобилизацилесе кĕрешмелле. МТС политотделĕсен, руководительсемпе механиксен трактор бригадисен ĕçне лайăх йĕркелес пулать. Кашни тракторист, машинист, комбайнер авăн çапнă çĕрте стахановец пулма, социализмлă ăмăртури ӳсĕмсене вăйлатса пыма тивĕçлĕ.

ВЦСПС-па СССР Наркомземĕ тата СССР Наркомземĕн Политуправленийĕ пирĕн Чăваш республикине, выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес енĕпе тунă çитĕнӳсемшĕн, МТС-сен паха çитĕнĕвĕсемшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратни çинчен колхозниксене ăнлантарса парса, ВКП(б) райкомĕсемпе МТС политотделĕсен колхозсенче социализмлă ăмăртăва татах та анлăн сармалла.

Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçланипе, МТС ĕçĕшĕн натуроплатăна пĕтĕмĕшпех парса татнипе, тырпулсемпе вăрлăхлăх курăксене пĕтĕмĕшпех лайăх пуçтарса кĕртнипе пирĕн Чăваш республикинчи колхозсен, машинно-тракторнăй станцисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн виççĕмĕш турĕнче те малти вырăна тухнине кăтартмалла, Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн татах та вăйлăнрах кĕрешмелле.

В. ЧЕРНОВ,
ЧАССР Наркомзем Политсекторĕн начальникĕ

Вĕренӳ пахалăхĕ ӳсрĕ

Шӳршăлти (Сĕнтĕрвăрри р.) туллимар вăтам шкулта Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ докладне сӳтсе явнă хыççăн вĕренӳ пахалăхĕ ӳсрĕ. Вĕренекенсем шкула пĕр сиктермесĕр çӳреме тытăнчĕç тата вĕренӳре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Сăмахран, З. Тихонова, М. Николаева, А. Колесников, А. Абрамов, Н. Николаева вĕренекенсем пур предметсемпе те «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе çеç вĕренсе пыма пуçларĕç. Вĕренӳре кая юлса пыракансем çумне вĕренӳ отличникĕсене çирĕплетнĕ. Вĕсем ĕлкĕрсе пыраймаи ачасене кулленех пулăшса пыраççĕ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Пирĕн землякем

Пĕртăван Яковлевсем

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (сулахайран сылтăмалла) взвод командирĕ Н. Яковлев, разведчик П. Яковлев (ăна «За отвагу» медальпе наградăланă), кавалерист И. Яковлев, сапер Я. Яковлев.

☆ ☆ ☆

Варвара Осиповăн тăватă ывăлĕ гитлеровецсене хирĕç пыракан вăрçă фрончĕсенче çапăçаççĕ.

Аслă ывăлĕ—Прокопий Яковлев фронта каиччен Мускавра, «Серп и молот» заводра ĕçленĕ. Завод дирекцийĕ ăна темиçе хутчен те премиленĕ, унăн хушамачĕ яланах хисеп хăми çинче пулнă. Прокопийăн пурнăçĕ, заводри мĕнпур рабочисен пурнăçĕ пекех, савăнăçлăн иртнĕ: вăл кăнтăрла цехра тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕ, каçхине—юлташĕсемпе пĕрле клубра е уçă сывлăшра çӳренĕ, е хăйĕн пĕлĕвне ӳстерес тĕллĕшпе ĕçленĕ. Анчах кĕтмен çĕртен вăрçă пуçланнă. Юнлă Гитлер хăйĕн вăрă-хурахла йыткĕтĕвĕпе совет çĕршывне тапăннă. 1941 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнче Прокопий Яковлев фронта кайнă.

— Варварсем!—тенĕ вăл тарăхнă сассипе.—Ылханлă юнĕçенсем, ан та ĕмĕтленĕр: телейлĕ пурнăça эпир сирĕншĕн мар тунă, сирĕншĕн мар пысăк заводсемпе фабрикăсене уçнă, колхозсемпе совхозсем организациленĕ... Хапсăнатăр та, анчах ахалех пулĕ. Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç. Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!

Фронтра. Вăл разведчик. Боевой задачисене пурнăçлать. Взвод командирĕ ăна пĕррехинче гитлеровецсен тыткăнĕнчен хăтăлса тухнă хĕрачапа—Украинка Луизăпа пĕрле боевой задачи пурнăçлама янă.

Çумăр шывĕпе йĕпеннĕ курăк çинĕн Прокопий хăйĕн фронтри юлташĕпе Луизăпа пĕрле вăрман хĕрринелле хырăмпа шуса пынă. Унччен те пулман, танксем кĕрлени сасă илтĕннĕ. Умра тăшман танкĕсем курăннă. Разведчиксем çухалса кайман: васкавлăн гранатăсем хатĕрленĕ, винтовкисене авăрланă.

— Эсĕ, Луиза, йывăç çине хăпар-ха, эпĕ танка хирĕç каятăп. Эпĕ вилсен, хаклă юлташăм, эсĕ маншăн та...

Хăюллă разведчик çĕр çумĕпе шуса пынă. Тĕмсен хӳтлĕхĕнче пытанса, вăл танк иртмелли вырăна гранатăсен çыххисене майлаштарса лартнă. Пĕр самант—сывлăшра тискеррĕн шартлатнă сасă янăраса кайнă. Фашистсен танкĕ чарăннă, ăна çулăм хыпса илнĕ. Уçланкăран тухнă тепĕр танк, çулçăсемпе маскировка тунăскер, тӳрех Прокопий пытанса выртакан тĕмсем патнелле куçнă. Луиза çакна асăрханă та юлташне пулăшас тесе йывăç çинчен анма пикеннĕ. Шăп çак вăхăтра гитлеровецсен танкĕ чарăннă, танк ăшĕнчен тухнă урнă йытăсем Луизăна çавăрса илнĕ. Разведчица Луиза вĕсем çинелле граната хыççăн граната ыткăнтарнă. Çав вăхăтра Прокопий хăйĕн ĕçне тунă. Тепĕр танка вут тĕртсе çунтарнă.

Çав кун ăна Луизăран уйăрăлма леккĕ. Çамрăк хĕрĕн илемлĕ сăн-питне вăл çав çапăçусем умĕн, çĕр çуммипе çумма-çуммăн шуса пынă чухне юлашки хут курнă. Пысăк çухату! Анчах мĕн тăвăн? Вăрçă.

Прокопий тепĕр çур сехетрен боевой задание пурнăçласа, питех те кирлĕ сведенисем пухса, ротăна таврăннă. Каçхине вĕсен полкĕ хĕрӳ çапăçусем туса, иртгернĕ. Прокопий вăл çапăçусенче виçĕ хутчен атакăна кайнă, хăй пĕччен 12 нимĕçе штыкпа чиксе вĕлернĕ. Çав çапăçусем Прокопий Яковлев юлташа парти ретне кĕме тивĕç панă.

Тепрехинче тăшман пирĕн чаçсем çине пĕр вĕçĕмсĕр вут-хĕм тăкса тăнă.

— Тăшманăн оборона линине татмалла та ăна хыçран пырса çапмалла,—çакнашкал приказ илнĕ Прокопий Яковлев тăракан часть.

Йĕпе-сапаллă çанталăк. Çумăр çунă. Хутран-ситрен çеç çăра пĕлĕтсем айĕнчен çутă уйăх тухнă, паттăр боецсен çулне çутатнă. Пирĕн боецсем тăшмана йĕрленĕ. Прокопий Яковлев, лайăх маскировка туса, 16 фрица пĕтерсе тăкнă. Вăл çак çапăçура хăй пĕччен 23 нимĕçе вĕлернĕ.

Кун пек кĕрешӳсем Прокопий Яковлев службинче татах та нумай пулнă. Хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн Правительство ăна «За отвагу» медальпе наградăланă.

Никифор та пиччĕшĕнчен юлмасть.

Нимĕç пехотин пĕр роти питех те кирлĕ çар объектне тапăннă. Хастарлă командир Никифор Яковлев тăшмана хирĕç хăйĕн боецĕсене çапăçăва ертсе кĕнĕ. Вĕсем нимĕçсен ротине пĕтерсе тăкнă. Тăшман вĕсене хирĕç çĕнĕ пополнени кĕртсе янă.

— Отстоять рубеж,—янăранă Никифорăн сасси. Вĕсем атакăна кĕнĕ. Юлашки гранатăсене ывăтса, нимĕçсене аркатса тăкнă. Запассем пĕтсе çитсен, хастарлă Никифор Яковлевпа унăн паттăр юлташĕсем нимĕç оккупанчĕсемпе ал вĕççĕн тытăçса çапăçнă. Çак вăхăтра пирĕн чаçсем килсе тухнă. Ку çапăçура командир Никифор Яковлев хисеплĕ вилĕмпе вилнĕ.

Çак хуйхăллă хыпар Варвара Осиповăн виççĕмĕш ывăлĕ—Яков патне часах çитнĕ. Свердловск хулинчи пĕр заводра ĕçлекен 21 çулхи çамрăк военкоматран хăйне пиччĕшĕ вырăнне фронта яма ӳкĕтлесе ыйтнă. Тепĕр кунне ăна юлташĕсем фронта ăсатнă.

Фронтра малтанах хăрушă пулнă, анчах тăшмана тавăрас шанчăк Якова паттăрлатнă.

Вăл—сапер, пĕррехинче чугунçул магистралĕн чи кирлĕ пункчĕ патне шуса çитнĕ. Яков Яковлев хуралçă салтака вăрттăн пырса пăвса пăрахнă та чугунçул линине пăрса хунă. Унтан кĕпер айне минăсем вырнаçтарса лартнă. Тепĕр ирхине противникăн танксем, бензин, продовольстви тата войскăсем турттарса пыракан эшелонĕ сывлăша сирпĕннĕ. Вăл фронтра çулталăка яхăн пулса çакăн пек паха ĕçсем сахал мар тунă.

Тăваттăмĕш ывăлĕ—Иван Яковлев Хĕрлĕ Çара кайиччен «Волга» колхозра конюхра ĕçленĕ. 18 çулхи йĕкĕт лашасене питех те юратса пăхни çинчен колхозниксем халĕ те асăнаççĕ. Тантăшĕсем ăна «кавалерист Иванюк» тетчĕç. Вăл хăй, тет, кавалерист пуласси çинчен тĕлленмен те пулĕ. Акă вăхăт çитрĕ—вăл Хĕрлĕ Çар ретне кайрĕ. Халĕ Çурçĕр фронтĕнче чаплă кавалерист шутланать. Фронтри «За родину, за Сталина!» ятлă хаçатăн пĕр номерĕнче кавалерист Иван Яковлев çинчен питех те мухтаса çырнă, командованин благодарноçне пичетленĕ.

Çапла çапăçаççĕ пĕр тăван Яковлевсем. Çакăн пек ывăлсем ӳстернĕ Вăрнар районĕнчи «Волга» колхоз членĕ Варвара Осипова юлташ.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Фронтовиксем патне

Çак кунсенче районри çыхăну конторин посылкăсем йышăнакан уйрăмĕнче хĕрӳллĕ ĕç пырать. Ир пуçласа каçчченех унтан çын таталмасть. Вĕсем хăйсен тăванĕсемпе юлташĕсем патне фронта парнесем яраççĕ.

...Чӳрече умне вата хĕрарăм пырса тăчĕ. Унăн аллинче шурă пирпе çĕлесе тунă илемлĕ посылка.

— Манăн виçĕ посылка, вĕсене фронта, хамăн ачасем патне яратăп, — тет вăл. — Пирĕн парнесене тутанса пăхĕç, ку пĕчĕк парнесемех вĕсене тăшманпа татах та вăйлăнрах çапăçма хавхалантарĕç...

Карчăк хыççăн тата виçĕ хĕрарăм çитсе тăраççĕ. Вĕсем те Действующи Çара парнесем яма килнĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕ Нина Просовицкая хăйĕн упăшки патне, Палан поселокĕнчи Дария Сутырихина шăллĕ патне посылкăсем ячĕç.

— Манăн ывăлăм тăшманпа кĕрешнĕ çĕрте вилчĕ. Ку посылкăна эпĕ унăн юлташĕ патне яратăп. Акă кăшт çыру та çыртăм: вăл ман юратнă ывăлшăн та тăшмана хирĕç вăя шеллемесĕр çапăçтăр, ăна эпĕ ырă сывлăх сунатăп, — тет килхуçи хĕрарăмĕ Д. Рукавишникова юлташ.

Çĕмĕрле районĕнчи ĕççыннисем тăван Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе çирĕп çыхăну тытаççĕ. Октябрь уявĕнче коллективлă парнесемсĕр пуçне, пĕччен парнесем 756 ячĕç. Юлашки вăхăтра ку ĕç татах вăйланчĕ.

Х. ЛИСИН.

Оборона значокĕсен нормисене пачĕç

КАЛИНИНО. Педучилищĕре вĕренекенсем çак кунсенче Çавал шывĕ çинче конькипе ярăнса ГТО тата БГТО значокĕсен нормисене пачĕç. В. Слонов 500 метрлă дистанцине 1 минутăра, В. Ивановпĕр минута та икĕ секундăра, Т. Захаров пĕр минута та 14 секундăра тухса ГТО значокĕн нормине пачĕç.

Г. АНДРЕЕВ.

Хĕрлĕ Çар Сталинград районĕнче наступлени туни çинчен ютçĕршывсенче мĕн çыраççĕ

Англия

«СТРАТЕГИ ТĔЛĔШĔНЧИ ПЫСĂК МАСШТАБЛĂ СОБЫТИ»

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Совет войскисем Сталинград районĕнче çĕнтерӳллĕ наступлени туса пыни çинчен пĕлтернисене Англири хаçатсем пĕрремĕш страницăсенче пысăк заголовоксемпе пичетлеççĕ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем наступлени туни пирки умстатьясенче тата хаçатсен вăрçăпа политика ĕçĕсене пăхса тăракансен статьисенче питех те интереслене çыраççĕ.

«Таймс» хаçатăн вăрçă ĕçĕсене пăхса тăраканĕ: кăнтăр фронтĕнче наступлени пуçласа янă вырăс çарĕсем паттăрла аслă ĕç турĕç, тесе кăтартса парать. Çав наступлени союзниксене питех те пысăк хавхалану кӳчĕ, мĕншĕн тесен вăл вырăссен иксĕлми вăй-хăватне кăтартса пачĕ.

«Ньюс кроникл» хаçатăн вăрçă ĕçĕсене пăхса тăраканĕ Хĕрлĕ Çар тăшмана Сталинград районĕнче пырса çапнине стратеги тĕлĕшĕнчи питех те пысăк масштаблă событи вырăнне хурса хаклать. «Халĕ ĕнтĕ Росси, — тесе çырать обозреватель, — Германишĕн вăл Росси çине пырса тапăннă вăхăтринчен нумай хăрушăрах тăшман пулса тăрать».

«Россия умне иртнĕ çулла тухса тăнă пысăк хăрушлăха пăхмасăрах, — тесе çырать «Дейли экспресс» хаçат, — Сталин полководец тăшмана аркатмаллах пырса çапма çарсемпе снаряжени пухса пынă. Халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар нимĕçсене Атăлпа Дон шывĕсем хушшинче хĕскĕчпе хĕссе лартрĕ. Çав хĕскĕч хĕсĕнсех çитеймен-ха, çапах та противникăн снабжени илсе тăмалли тĕп линине совет войскисем касса татрĕç. Германин питех те нумай йышлă çарĕ хăрушлăх умĕнче тăрать».

Хĕрлĕ Çар наступлени туни çинчен калакан хыпарсем Англири радиопередачăсенче те паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Радиокомментатор Холсуэй çапла каланă: «Вырăссем халĕ хăйсен наступленине вăйлăн туса пыраççĕ, Сталинград районĕнче Германи çарĕшĕн çавтери йывăр лару-тăру пулса тăнă пек туйăнать; Германи çарĕн пысăк вăйĕсем танатана лексе пĕтсе ларма пултараççĕ. Вырăссем ĕнтĕ тăшманăн пысăк вăйĕсене пĕтерсе тăкнă, пиншер салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна илнĕ. Çакă вăл нимĕçсем çавăн пек пулассине пачах та кĕтменнине кăтартса парать. Гитлер вăрçăн мĕнпур хăрушлăхĕсем умĕнче тăрать. Нимĕç войскисене вырăс фронтĕнче çапса аркатни, паллах, вăрçă пыракан ытти вырăнсенче те пысăк улшăну кӳрĕ».

США

«НИМĔÇСЕМ ВĂРÇĂ ПУÇЛАННĂРАНПА ТУСНĔ ЧИ ПЫСĂК ПОРАЖЕНИ»

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар Сталинград районĕнче тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапни çинчен калакан хыпарсем пирки Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче çаплах питĕ интереслене çыраççĕ, калаçаççĕ. Совет войскисен çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтернисене пур çĕрте те — урамсенче, метрора, автобуссем çинче хавхаланса сӳтсе-яваççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем наступлени туса пыни çинчен пичетре анлăн çыраççĕ, анлă радиопередачăсем параççĕ.

«П. М.» хаçатăн обозревателĕ: нимĕçсем вăрçă пуçланнăранпа малтанхи хут чи пысăк поражени тӳсрĕç пулмалла, — тесе çырать. — Хĕрлĕ Çар наступлени туни калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Совет войскисем Калач хулине тата чугунçулăн чылай пункчĕсене йышăнса илни тĕплĕн те лайăх хатĕрленсе тунă операци пулса тăрать, çакă вăл Германи çарĕн мĕнпур çапăçури хăватне хавшатма пултарать.

Оверсис ньюс агентствин обозревателĕ Пратт каланă тăрăх, Хĕрлĕ Çарăн хальхи наступленийĕ унăн вăрçăри чи пысăк çитĕнĕвĕ пулса тăрать. Хĕрлĕ Çар тăшманăн салтакĕсене нумай йышлăн тыткăна илни вăл тăшмана мĕнтери вăйлăн пырса çапнине кăтартса парать.

Юнайтед пресс агентствин обозревателĕ Соулсбери çапла çырать: совет войскисен наступленийĕ çавтери хăватланса пырать, çакă вăл нимĕçсене кăлтăрта çапса аркатнипе вĕçленме пултарать. Совет войскисем Сталинград патĕнче Германи войскисен пысăк пайне танатана çаклатма пултараççĕ, тет.

Китай

«СТАЛИНГРАД РАЙОНĔНЧЕ ТУНА ÇĔНТЕРӲ ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН ÇАПĂÇУРИ СОЮЗНЕ ÇИРĔПЛЕТЕТ»

ЧУНЦИН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем Сталинград районĕнче гитлерла войскăсене çĕнтерни Китайри общественноçа питех те хавхалантарать. Гоминдан ЦИК-ĕн халĕ пыракан пленумĕн каçхи ларăвĕнче Хĕрлĕ Çар ăнăçлă операцисем туни çинчен Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернине вуласа панă. Китайри мĕнпур пичет çав операцисем çинчен тĕплĕ информаци пичетлесе кăларнă тата вĕсем пирки питех те интереслене çырать.

Турция

«НИМĔÇ ВОЙСКИСЕНЕ ХЫТТĂН ПЫРСА ÇАПНИ»

СТАМБУЛ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем Сталинград районĕнче наступлени туса пынине Турци пичетĕнче анлăн çутатса параççĕ. Çав наступлени çинчен пĕлтернисене хаçатсем пĕрремĕш страницăсенче шултăра заголовоксемпе пичетлеççĕ. Нимĕçсен мĕн чухлĕ салтак вилсе пĕтнине, çавăн пекех тата совет войскисем тытса илнĕ салтаксемпе трофейăсем çинчен калакан цифрăсене хаçатсем заголовоксенче кăтартса параççĕ.

Совет войскисем наступлени туни çинчен Турцири радио та передачăсем парать.

— Çак эрнен пуçламĕшĕ пĕтĕм тĕнчене хавхалантаракан çĕнĕ событи пулнипе палăрса тăрать,—тенĕ Анкарари радиопередачăра.—Сăмах кунта вырăссем Сталинград районĕнче Германи войскисене хăватлăн пырса çапни çинчен пырать. Çавăн пек пырса çапни пысăк результатсем кӳчĕ те ĕнтĕ.

Швеция

«ХĔВЕЛТУХĂÇ ФРОНТĔНЧИ ПЫСĂК СОБЫТИ»

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Стокгольмри пур хаçатсем те совет войскисем Сталинград районĕнче наступлени туса пыни çинчен пĕлтернисене пĕрремĕш страницăсенче пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. Хаçатсем çав событи çинчен хăйсен шухăшĕсене палăртса çыраççĕ.

«Свенска дагбладет» хаçат: вырăссем Сталинград районĕнче наступлени туни чăннипех те тĕлĕнмелле ĕç пулса тăрать, тесе çырать. Хаçат—нимĕç войскисене çав районра тĕрĕссипе çавăрса илнĕ, вĕсемшĕн питех те пысăк хăрушлăх тухса тăнă, тесе палăртать.

РУЗВЕЛЬТ МАРОККА СУЛТАННЕ ПОСЛАНИ ЯНĂ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт Марокко султанне Сиди Мохаммеда послани янă. Çав посланире вăл çак вăрçăра çĕнтерни Çурçĕр Африкăри Марокко халăхĕпе француз халăхĕшĕн мир тапхăрĕ тата çав халăхсем чечекленсе ӳсес тапхăр пуçласа ярĕ, тесе шанса каланă. «Тĕнĕл держависем, — тенĕ посланире, — пирĕн çĕршывсен тăшманĕсем пулса тăраççĕ. Çав тăшмансем вĕсем Çурçĕр Африкăра çарпа политика тĕлĕшĕнчен пуçпулса тăрасшăн. Вĕсене пĕтерессишĕн пыракан пĕрлехи кĕрешӳре эпир пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕшĕн эпĕ телейлĕ, тенĕ.

ДАКАРА АМЕРИКĂН ÇАР МИССИЙĔ ПЫНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Дакара Америкăн çар миссийĕ пынă.

ТАСОС УТРАВĔ ÇИНЧИ ВИЛĔМ ЛАГЕРĔ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Çапла пĕлтереççĕ: нимĕçсем Грецин Тасос ятлă утравĕ çинче васкаса пысăк çар аэродромĕ тума пуçланă. Çав аэродрома тунă çĕрте политикăллă ĕçсемшĕн тытса хупнă темиçе пин çын ĕçлет, вĕсене унта Балканри мĕнпур çĕршывсенчен илсе пынă.

Тĕрлĕ çар объекчĕсем тунине çынсене пĕлтерес мар тесе, нимĕçсем пĕр-пĕр участокри ĕçсене ĕçлесе пĕтерсен, унта ĕçленĕ çынсене апата темĕнле япала хушса параççĕ. Çав çынсем вара тепĕр куннех вилеççĕ.

ЛИВИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕç-пăшаллă вăйĕсен командованийĕ çапла пĕлтерет: Америка войскисем ĕнер Аджедабипе Эль-Агейла хушшинчи çул çинче противник патне çитнĕ. Англи бомбардировщикĕсем ноябрĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Триполине тапăннă. Çавăн пекех тата Бизертăпа Сицили çине те бомбăсем нумай пăрахнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ЮГОСЛАВИ ХАЛĂХНЕ ВЫÇĂ ВИЛМЕЛЛЕ ТУСА ХУНĂ

СТАМБУЛ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Югославире выçлăхпа чирсем пирки куллен пиншер çын вилет. Недичăн хаçачĕсем вилекен çынсен хисепĕ çуралаканнисен хисепĕнчен пысăкраххине йышăнаççĕ. Выçлăх пирки çемьи-çемьипе вилеççĕ. Ашшĕ-амăшĕсем вилнĕ ачасем, пăхакан çынсемсĕр тăрса юлнăскерсем, çĕршыв тăрăх вырăнтан-вырăна куçса çӳреççĕ.

РЕЙНОНА, ДАЛАДЬЕНЕ, БЛЮМА ТАТА ГАМЕЛЕНА ГЕРМАНИЕ ЯРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Франципе Испани чиккинчен çапла пĕлтерет: Риомри процесра айăпланă Рейнона, Даладьене, Блюма тата Гамелена Бордо хулине илсе пынă, унтан вĕсене Германие яраççĕ. Германи ыйтнипе Виши влаçĕсем нимĕçсене Риомри суд процесĕн материалĕсене панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ. 1118 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.